„Канаш“ хаҫат ҫумĕнҫе тухаҭ.

# КАПКĂН

21-мĕш №

Нойапĕршĕн, 1926 ҫ. 2-мĕш ҫул тухаҭ.

## Милитсисем ҫук ҵух.



Йал вăранаҭ.

# РАСТРАТТĂ

Налей, налей, товарищ,
За здравную чару.
**(Растратҫĕксен йурринҫен).**

Ҫапла ĕнтĕ. Хоспотин растраттă ури аллисемпех, сĕмсĕр сысна пек сĕтел ҫине ăлăхса ларҫĕ. Никамран та хăрамасť, никамран та вăтанмасť. Растраттă ăшă вырăна кĕрсе ларať. Ăшă вырăн ăҫта пуррине вăл сантан ыйтса тăмасť. Сансăр пуҫнех питĕ лайăх пĕлет.

— Ну, мĕнле пурнан. Шалу пысăк-и?

— Шалу пысăках мар та, вырăнĕ тоххотлă.

Ҫакă растратҫĕксен формулĕ. Ҫак алкепрă формулĕпе растратҫĕксем ĕҫлеҫҫĕ. Алкепрă тенĕрен алкепрăна лайăхрах илсе пăхарха. Унта темскер ратиккал текен йапаласем пур. Ратиккал пирĕншĕн йăвăр йапалаха вăл. Унпа лапăртатса тăмăпăр. Ăнланма ҫăмăлтарах пултăр тесе, епĕр ахаҫ арифметтĕках ĕҫе кăнăҫтарăпăр. Ват, епĕ арифметтĕкĕ тăрăх шутлама пуҫлатăп. Лайăх астуса пырăр. Пĕрре $\frac{1}{913}$ ҫине валеҫсен 913 пулať. Ие тата ак ҫапла: $1{:}\frac{1}{913} = \frac{1 \times 913}{1} = 913$. Ку арифметтĕк тĕлĕшĕнҫен. Пĕр пуса темиҫе пай ҫине валеҫсен 913 пулса тăрať. Пĕр пусран 913 ҫислона хут (рас) теме те пулať, 913 хыҫне пус тесен пус теме пулať, тенкĕ тесен — 913 тенкĕ пулať.

Вĕреннĕ ҫынсем хыҫҫăн каймăпăр. Епĕр хамăр пĕлнĕ пек тăнланăпăр. 913 снаменаттĕл тăрринҫе 1 ҫислана (ҫиҫлиттĕле) Ҫĕрпӳ уйесĕнҫи 9-мĕш уҫҫаскăри страхакĕнт Иемеҫйанăв тесе шутлăпăр, 913 ҫислона (снаменаттĕле) Иемеҫйанăв страхакĕнт халăхран страхховой укҫи пуҫтарса 913 тенкĕ пĕтернĕ тесе шутлăпăр. Ĕҫ пулса та тăҫĕ.

Акă мĕн пек епĕр сатаҫ шутлама пĕлетпĕр. Рапфакра та, Совпартшкулта та вĕренесси кирлĕ мар. Иемеҫйанăв пĕр пĕҫҫен 913 тенкĕ растраттă тунине шутласа та кăлартăмăр. Респуплĕкре пĕр Иемеҫйанăв ҫеҫ страхакĕнт мар. Саххарăв та, Карппăв та страхакĕнтсемех. Иемеҫйанăвпа Саххарăвпа Карппăв хушшинҫе пĕр ҫак ҫеҫ пур ĕнтĕ. Саххарăвпа Карппăв Ҫĕрпӳ уйесĕнҫи страхакĕнтсем мар, Иетĕрне уйесĕнҫи страхакĕнтсем. Тата Саххарăвĕ сахалтарах растраттă тунă—283 тенкĕлĕх ҫеҫ, Карппăв, Карпăв 700 тенкĕ. Нумай мар вĕт? Нумай мар конешнă. Вĕсем растраттă туни Нурăсри копператтивпа (Иетĕрне уйесĕ) Виҫикассинҫи (Ҫураҫăк вул.) копператтивсем растраттă туни патне ҫитесси айакра-ха. Вĕсен ку тĕлĕшпе нумай ĕҫлеме тивет.

Ну, Нурс копператтивĕ терĕмĕр тĕк Нурăс копператтивне илĕпĕр. Нурăс копператтивĕ (йулташлăхĕ) сахалах та мар, нумайах та мар, 2.000 тенкĕ растраттă тунă. Виҫикасси, ҫын айне йулас мар тесе, ăмăртмалла хытланнă, 4.000 тенкĕ пĕтернĕ.

Шутласан шутласан, растраттă вĕҫне те тупас ҫук. Тин ҫеҫ страхакĕнтсем растраттă туни ҫинҫен ҫыран, тепĕр растратти сиксе те тухať. Пĕринҫен тепри пысăкрах. Растраттăна шутласа кăларма та ҫук. Растраттă Ҫĕрпӳре те, растраттă Иетĕрнере те, Улатăрта та, Шупашкарта та пур. Шупашкарах илсе пăхар ха. Унта тем тĕрлĕ ревиҫи тавраш, комиҫҫи ҫине комиҫҫи утланса ларнă. Комиҫҫи тăррингҫе поткомиҫҫи ехĕлтетсе кулса ларať. Растраттă ҫавах та пур. Акă Совпартшкул савхосĕ Ҫеркейĕв йулташах илер. Унăн ҫулахи ревиҫире 360 тенкĕ тухман. Нимĕн те пулман. Ничаво. „Зима не лето, пройдет и это".

Халĕ ҫĕнĕ савхоса хăй ĕҫне панă ҫухне 609 тенкĕ те 63 пуслăх йапала тухман, укҫан—97 тенкĕ. Мĕн пурĕ— 1066 тенкĕ те 63 пуслăх тухман.

Тата Страхкассăра та растраттă пур терĕҫ те, пурне те пĕр ҫĕре купаламăпăр. Атту ытлашки тăварлă пулĕ. Тăварлă йашкана ҫийесси пулмасť. Ҫавăн пекех вулакансем те ҫак тери нумай растраттă туни ҫинҫен илтсен, йерĕнсе кайĕҫ, хăсма пуҫлĕҫ.

Хăсасси—курăнсах тăрať.
Хăсас вăхăт ҫитрĕ те ĕнтĕ.

ҪАВККА.

## Ревкомиççи васкамасть.

Йалсенчи ревиçи комиççисем, хăшĕ, 7—8 уйăхра та йалсоветне пĕр ревиçи туман.

Йалкор çырăвĕнчен.




«Капкăн» хуçи: Кун пек начаркка, урине аран сĕтĕрекен ĕне çине ларса ревиçи тума кайас пулсан, 7—8 уйăхра мар, 3 çулта та йалсоветне çитеймĕн. О-хо-хо! Хо-хо-хо! Ĕне çинчен анса лайăхрах кĕсре çине ларас пулать. Неуштта ревкомиççисем çакна туйса илмен...

---

## Лăплантарни.

Пĕр чирленĕ карчăк хутланса ларнă та, хуйкăрса ахлатать. Ывăлĕн ывăлĕ ун умне çитсе тăчĕ те, калать:

— Мĕн ес, мамак, пĕр майăх ахлататăн? çеç сывлатăн?

— Ах, ывăлăм, ывăлăм, ан шарлах, нумай çылăхамăрсем пирки тамăках кайăп, тамăках.

— Ан калаççам, асанне, нихçан унта ес каймăн.

— Ленкĕп çав, ленкĕп, ленкĕпех.

— Çук, çук ленкмесĕн. Ăçтан вара ленкĕнха! Тамăкра унта «шăл шакăлтатгару» пулать, теççĕ. Санăн ав пĕр шăлу та çук. Мĕн вырăнсăр кулçанан.

Карчăк кăна ятсессĕн лăпланчĕ.

ХĔРЛĔ ХВЕТĔР.

## Малта пыракан çын.

— Аптрамалла ман арăмпа! Çынсен арăмсем пур вуламалли çурта та, пухăвсене те, телекаткка пулса вулăсри пухăвсене те çÿреççĕ, ман арăм пур килтен ура йарса пусмасть. Питĕ кайра пырать. Ун çинчен вулăсри хĕрарăм пайне пĕлтерес пул. Унта унăн тĕттĕмлĕхне çутатĕçха!

— Хăçантанпа есĕ, Тимухха пиче, ун пек малта пыракан çын пулса кайрăн.

— Ирĕксĕрех малта пырăн! Ларать пÿртре кунĕ кунĕпе те, ĕçме, йе усăлса çÿреме тухас пулсан, тÿрех кĕрĕк аркинчен уртăнать.

ШĂШИ.

# „Каҫҫа кайаҫҫен—каҫҫа кайас, каҫҫа кайсан“...

Хӗвел анса лара пуҫланӑ. Епӗ халӑх пухӑвӗнҫен таврӑнтӑм та каҫҫа кайсан кайалла таврӑнакан хӗрсене вӑрҫса ларатӑп.

Унҫен те пулмарӗ алӑкран пӗр хӗрарӑм килсе кӗҫӗ, аллине хутаҫпа ҫиксе кӗпе-йӗмсем ҫӗклевӗ. Лайӑхрах тинкерсе пӑхатӑп та, пӗр ерне анҫах маларах каҫҫа кайна йӑмӑкӑм тӑра парать.

— Мӗнле есӗ ҫӗрле ҫӳретӗн, пӗр майлах таврӑнмарӑн пуҫ вӗт, тесе ун патнерех пырса тӑтӑм. Епӗ ура ҫине тӑнӑран вӑл макӑрса, вӑшкӑрса йаҫӗ.

— Мӗнле пурнас унта манӑн, упӑшкам кашни ҫӗрех саҫҫетанисене, йе пухусене ҫӳрет тата кӳрӗш арӑмӗсем, хуҫамӗш питӗ усал пулмалла теҫҫӗ, тет. Хӑй манран шиклевнӗ пек пулать.

— Хуҫама усаллине йӑвашшине хӑв курмгрӑним апла? Сана пӗр сӑмах та каламарӗ пуҫ, вӗт?...

— Мана хама каламан та... кӳрӗш арӑмӗсем питӗ усал пулмалла вӑл, теҫҫӗ...

— Е, еппин хаҫ есӗ курманка.. Хӑвпа вӑрҫмасӑрах, ҫын сӑмаххипех ҫӳрен мӗн ха... Кӗҫӗрлӗхе, пӗр килнӗскер, кунтах выրт та-ха, ыран ирхине кайӑн вара, тетӗп.

— Ҫук, ҫук! Унта кайса пурнаҫҫен шыва сиксе вилем... каймастӑп, тесе хуҫӗ ман йӑмӑк.

— Мӗнле-ха? Сана кунта кам тӑрантарса пурнать? Халӑх пухӑвӗ пайан, каҫҫа кайна хӗрсем кайалла нумайӗшӗ килнине кура, ҫӗр памастпӑр, тесе постановлени йышӑнҫӗ. Пирӗн ытлашки ҫӗр ҫук сана тӑрантарса усрама, тесе тепӗр кунне хамах леҫсе йатӑм вара. Питӗ хытӑ, ан таврӑн тесе, йатласа хӑвартӑм.

Увҫен те пулмарӗ йалӗпе пилӗк хӗр кайалла килнӗ тенине илтрӗм. Кӳрӗш хӗрӗ, пӗҫӗккӗскер, пыҫӗ те:

— Муҫи, сана аппа килтӗр терӗ, тет.

— Ара, аппу килнӗ-и вара сирӗн? Каҫҫа тин ҫеҫ кайнӑҫҫӗ, вӗт-ха, тетӗп епӗ.

— Вӑл пӑрахса килнӗ унтан хаҫ, терӗ те пӗҫҫӗккӗскер тухса вӗҫтерҫӗ.

Мӗн тума ҫӗннине пӗлмесӗрех, кайса йатлам ха кӑна, тесе епӗ те ун хыҫҫӑнах тухса утрӑм.

— Ну, мӗн килӗшмерӗ сана тата, мӗншӗн таврӑнтӑн?—терӗм епӗ тӳрех.

— Мӗн тума килесси, мӗнле пурнас унпа манӑн, тет.

— Мӗншӗн апла калатӑн: сан упӑшку та ҫынах пулӗҫке? Каҫҫа кайаҫҫен курнӑ пулӗҫке есӗ ӑна?.. Хаҫ мӗн ҫиме килтӗн кунта? тетӗп.

Кырҫӑкки кӑмака ҫинҫен анҫӗ те:

— Ара, есӗ, хӑта, хӑвах шухӑшлаха: мӗнле пурӑнтӑрха унта вӑл, упӑшки «вӑркӑссӑм» пулнӑ тет унӑн, хаҫ Марйене турӑсем ҫинҫен калама тытӑннӑ, тет те... тепле пурӑннӑ-ха хаҫ те ку гаранҫен, тет.

Тӗлӗнмелле. Йепле ха ӗнтӗ «вӑркӑссӑм» тесе тарса килнӗ. Мана сута памa сайавлени ҫыртарасшӑн тата:

— Елӗ вӑрттӑн тухса килтӗм, йапаласене илме кайма вӑтанатӑп. Мана йакаҫҫӗ вӗсем вара. Ҫавӑнпа сут урлӑ шырас, тетӗп. Сайавлеви ҫырса парха, тет.

— Сана сайавлени ҫырса пама мар, вӑрттӑн тарса килнӗшӗн хӑвна сута памалла, терӗм те ҫиленсе тухса кайрӑм.

Арэ, пӗри:—кӳрӗшсем усал вӑл тесе каланӑшӑн тарса килтӗр, тепри:—«вӑркӑссӑм» вӑл, тесе тарса килтӗр, тепри:—саҫҫетанисене ҫӳрет тесе, тата тепри:—каҫхине пӗрле выртмасть тесе... вара ӑҫта хурса пӗтерес ха йалта кайалла таврӑнакан хӗрсене?.. Малараххӑн мӗн хыпса ларнӑши вӗсем аҫине лайӑхрах сӑнаса пӗлмесӗр?..

Каҫҫа кайаҫҫен—каҫҫа кайас, каҫҫа кайсан—анне кайас, тени пек пулӗҫке ку.

ПАҪУРА.

---

## Пролеттари.

— Сан сотсиаҫьи положени мӗнле?
— Пролеттари!
— Ӑҫтан? Сан ҫурт пурҫке?
— Хм... Епӗ Пролеттарски овракра пурнатӑп. Ҫавӑнпа та—пролеттари.

МИКИШ.

# Паллă çын пулмалли майсем.

* * *

Самоконккă пиҫĕкине кĕрсе ҫӳхенсе хăват илсе тĕрлĕрен хуликанлă ĕçсем тусассăн, çамрăксем те, унта кунта аслă вырăнсенҫе лармаа пулсан та çăмăллăнах паллă çын пулма пултараççĕ Ун пек çынсем Шупашкарти „шурă çуртра" тӳлевсĕр хваттер туйанма шансах тăма пултарççĕ.

* * *

Копператтивсене трупаран вĕççе тухма пулăшакансене те пит хисеплеççĕ: вĕсене кирек ăçти суйнйа та хăй патне пырсан хисеплесе ытти çынсенҫен уйрăм лартса хĕç пăшалпах сыхлаттарат.

* * *

Хушамату ҫăваш хушамаҫĕ йевĕрлĕ пулсан, ăна ҫасрах илемлĕ хушаматпа улăштарас пулат, примертан: Линтропский, Лениневратский, Шупашкарский; йе йĕкреш хушаматпа улăштарас пулат, примертан: пăрçа—пашалу, йĕке—хӳре тата ытти те. вара паллă çын пуласинне шансах тăр.

* * *

Хулана куççа пĕр вунă тенкĕллĕх вырăн тупсан, ҫăн малтан кăлифе—шлавар туйанас пулат, вара йалти ҫăваш арăмупа аҫупăҫусене пăрахса питне штукатурланă майра туйанмалла; кун пек çын малта пыракан çын шутне кĕме пултарат.

* * *

Уҫрештени пуçлăхĕ хĕрарăм слушашҫасене ернере пĕрре улăштарса пырса, вĕсемпе кăпинетра хупăнкаласа ларсан, Кришкă Распуттĕн ҫапне илме ҫасах пулат, çак майпа палла тухасшăн тăрăшакансем Шупашкарта та сисĕнме пуçларĕç.

* * *

Йалтан килнĕ çын санпа ҫăвашла калаçма тапратсав, есĕ ăна хирĕç вырăсла пит ҫапгă пĕлмесен те, вырăслах шаплаттарса хур. Ҫăн малтан çапла калави усăллă, теççĕ: «мы твойа йасык не снайĕм, расковори мене рузки йасыккăм». Ху ҫăваш иккенне сисесрен сыхланмалла вара.

* * *

Йулашкинҫен: паллă çынсене пĕлес тесен, ҫăваш «Капкăнне» çуллен-çулах илсе тăрас пулат, паллă çынсен «хутошĕствисем» çинҫен унта пит тĕплĕ çырса пĕлтереççĕ. С—К.

# И Н К Е К.

Паҫук арĕм Ухтипе
Ҫан пек уçă сассипе
— Торукаҫ! торукаҫ, тенине
Ҫасах илтрĕ хура ĕне.
Ĕни—муук, терĕ те
Пăлтăр умне çитрĕ те.
Шăлтăр-шăлтăр пăтти-патт
Ĕне кĕҫĕ пăлтăра...
Паҫук пуртĕн алăкне
Аран уçса ĕлкĕрҫĕ,
Атту пусан хура ĕне
Майракипе тĕргеҫҫĕ.
Пӳртри çамрăк пăрава
Хура ĕне «йаш» çулат,
Унтан татах малалла
Лаххан патне çаврăнат.
Паҫук арĕм Ухтипе
Пĕҫĕкеççĕ ҫӳлмекпе
Ĕне патне пыраҫҫĕ,—
Урай хăми «шарт» турĕ.
— Мĕншĕн-ха ку? Пĕтрĕ пуç!
Паҫуу к!!!
Курмастăн-им, ула куç!
Урай хăми хуçăлнă...
Çитрĕ пысăк ĕнене
Мекĕрленсе çĕклеме,
Паҫук тытрĕ пуçĕнҫен
Арĕм тытрĕ хӳринҫен,
Çапах мĕскĕн хура-ĕне
Анса карĕ сак айне.
Енен кайри урисем
Иккĕшĕ те хуçăлҫĕç
Шалçа çине ӳкнипе
Куçĕсем те хупăнҫĕç.
Найанлайса, урайне
Йĕлепеле çĕртнĕшĕн,
Паҫук хăйĕн арăмне
Ҫышкипеле хĕнесшĕн.
Хура ĕне вилнишĕн
Сутне тума пире мар;
Анҫах çакна калăпăр:
Пӳртри шывлă лаххапа
Урай çĕртме кирлĕ мар!

Н. ЕВТОККИМĂВ.

# Куҫ ҫӗлхи.



Карҫӑк: Ҫитмӗл те ҫиҫӗ хура вӑрман тӑррине хӑҫан хура халӑх пӑхса куҫӑхтарӗ, ҫавӑн ҫухне тин ҫак аҫа куҫӑхтӑр. Ҫитмӗл те ҫиҫӗ хайар вӗрекен ҫӑл куҫне хӑҫан хура халӑх пӑхса куҫӑхтарӗ, ҫавӑн ҫухне тин ҫак аҫа куҫӑхтӑр...

«Капкӑн» хуҫи: Ҫитмӗл те ҫиҫӗ ухмах карҫӑк хӑҫан кӗнеке сеппе паллашӗҫ, ҫавӑн ҫухне сан аҫу куҫӑхма пӑрахӗ.

## Ҫасах пулкалаҫ.

(Иуптару).

Пӗр ҫирӗкӳре пӑраҫнӗкре
Пуп тытӑннӑ мӑн кӗлӗре
Сӑмах калама.
Амвон ҫине вӑл тайанса
Сӑмах ҫапвӑ, хыпаланса
Иерҫмен сывлама.
Хитре, вӑрӑм каласассӑн,
Тупӑш пулӗ тӳр парсассӑн
Тесе шутланӑ.
Ман сӑмахӑм пылак тесе,
Ӑна халӑх итлет тесе,
Питӗ савӑннӑ.

Ир пуҫласа, каҫҫен тӑрса
Пуп сӑмахне хыпа-хыпа
Халӑх ывӑннӑ.
Иериппенех: пӗҫҫен-пӗҫҫен,
Пурте, пурте пуп сисиҫҫен
Тухса шӑвӑннӑ.
Тӗлӗнмелли нимӗн те ҫук,
Халӑх ывӑнса ҫитнӗ ҫух
Пулма пултараҫ.
Ҫакӑн пекех пирӗнпе те
Вӗҫсӗр, вӑрӑм тукӑтсеппе
Ҫасах пулкалаҫ.

Ҫ. ШӐПҪӐК.

# Вӑкӑр, йе Айпеҫри йалхуҫайстви йулташлӑхӗ.

Вӑкӑр. Вӑкӑр мар тӑк, мӑкӑр тейӗпӗр. Пирӗншӗн пурӗ пӗрех. Хуй вӑкӑр те, хуй мӑкӑр те. Мӗнле каласан та икӗ мӑн майракаллӑ, ӗне хӳрыллӗ выђӑх пулсӑ тӑрай. Анђах вӑкӑр сӑмах ҫумне Айпеҫ йалхуҫайстви йулташлӑхне ӑҫтан пырса хутшӑнтарма пултӑр-ха? Вӑкӑр-выђӑх, йалхуҫайстви йулташлӑхӗ, ӗҫлекенсемпе хресђенсем пӗрпӗрипе алла алӑн тытӑнса, сотсиалисӑм тӑвас ӗҫре хайӗн кирлӗђне хуракани.

Кураттӑри, икӗ йапала. Иккӗшӗн те шухӑшӗсем икӗ йенпелле. Вӑкӑр тавраш шухӑшлама пӗлмест теҫҫӗ те, анђах вӑхӑђӗ ҫитсен, кӗтӳре ӗнесем ҫине утланса ларайӗх. Епӗр туртса кӑларнӑ йӑла мар.

Айпеҫри йалхуҫайстви йулташлӑхӗ те Ђӑвашпроисвотсойуспа токӑвӑр тунӑ ђухне, ӗнесене ђуптарма вӑкӑр илетпӗр тесе, токӑвӑр тунӑ.

Ӑратлӑ выђӑх—хресђенсене кирлӗ. Ӑратлӑ выђӑх хресђенсене туйантарас тесе патшалӑх тӑрӑшай.

Паллах, Ђӑвашпроисвотсойус та Айпеҫри йулташлӑх вӑкӑр илес тесен, укҫа пэма ђарса тӑман. Илӗр. Ӗнесене шултра йӑхлӑ тӑвӑр. Ҫапла шухӑшласа Ђӑвашпроисвотсойус вӑкӑр илме укҫа тыттарнӑ.

Ну, есӗр: Айпеҫ йулташлӑхӗ вӑкӑр илмен, Ђӑвашпроисвотсойуса лартнӑ ӗнтӗ ку тесе шухӑшларӑр пуђ! Питех хӑраса ан ӳкӗр, вӑкӑрне илнӗ Анђах... х-х-х... хресђенсем пӑшӑрханаҫҫӗ. Хресђенсем вӑкӑра кӗтӳре ҫӳретсе пулмасй, пӗтерет, теҫҫӗ, тесе „Пуҫламӑш“ йалхуҫайстви йулташлӑхӗн претҫетаттӗлӗ Кашкарӑв правлени саҫҫетанийӗнђе токлат тӑвай.

„Мӗншӗн тесен, вӑкӑр кӗтӳҫ хыҫҫӑн та, йал хушшинђе ҫынсене те хыҫалтанах хӑваласа ҫӳрет. Урам хушшинђе иртсе ҫӳреме те памасй. Урам хушшинђе ҫӳреме те хӑрушӑ, хађ хађ сӗксе вӗлерет“.

Мӗн тӑвас ку вӑкӑрпа? Сутас, сутас пулай. Котлова вӑкӑр сутма хушаҫҫӗ. Ҫакӑ саҫҫетани авкустӑн 6-мӗшӗнђе пулнӑ. Волоккитӑ, пӳрократтисӑм ҫук пирки, вӑкӑр опператсийӗ авкустӑн 15 мӗшӗнђе пӗтет те. Акӑ мӗнле токлат туса парай ку вӑкӑр пирки Котлов йулташ:

„Вӑкӑр ашӗ 8 пӑт пулђӗ—48 тенке сутрӑм. Ҫӑвӗ 1 пӑт—12 тенкӗ. тирӗ—10 тенкӗ. Вӑкӑр мӗн пурӗ 70 тенкӗ

— Миҫе тенке илнӗђђӗ ха ӑна?

— 105 тенке.

### Постановлени.

„Вӑкӑр сутса илнӗ 70 тенке сутуилӳ тунӑ ҫӗре йарас. Сутуилӳ опорођӗ туса 35 тенкӗлӗх тиффитсита кӑларнӑ хыҫҫӑн каллех вӑкӑр илес“.

Жил был царь,
У царя был двор,
На дворе был кол,
На коле висит мочало.
На начать ли Вам с начала
Жил был цар...

Ҫакӑн пек вӗҫсӗр хӗрсӗр, тӗнђе хӗрне ҫитиђђенех кайма пулай. Анђах тӗнђе хӗрне ҫитмеллӗх йулташлӑхӑн кашни вӑкӑр пуҫне 35 тенкӗ теффитсит курсан, укҫа йулӗши? Ӑна вара епӗр пӗлме пултараймастпӑр.

ПИНЕР.

---

## Хӑратпӑр.




— Претҫетаттӗл! ма есӗр вывӗскине ђӑвашла ҫырмастӑр ара?

— Мӗншӗн тесен, ђӑвашла ҫырсан пурте ӑнланаҫҫӗ те, кивҫен илме килекенсем нумай пулӗҫ тесе хӑратпӑр.

Улӑп-Санђукӗ.



## Тирпейлӗ йалсовет.

ПСК(п)П Тӗп Комиттеҫӗ, Октапӗр уйавне иргерне ҫухне укҫа-тенкӗ йен ҫен пит тирпейлӗ пулмалла, тенине Палтай вулӑсӗнҫи Шемертен йалсовеҫӗ урӑхларах ӑнланнӑ. Мӗнле ӑвланаймарӑр тесен, ухмаха пересҫӗ, хут сахал вӗреннӗ пирки ӑнланаймарӑмӑр теҫҫӗ. Ҫав хут сахал пӗлнийех пӗгеретҫке.

„Октапӗр праҫвӑкӗнҫе Шемертен йалсовеҫӗ пуш кӗлете турки туса 137 тенке сутса йанӑ та, укҫаран пуйӑнӑ майӗне, йалсовет ҫленӗсем, Октапӗр праҫвӑк йаҫӗпе 7 ҫетвӗрт сӑмакун ӗҫсе йанӑ (Шемпе).

Мӗнле хырӑмӗсем ҫурӑлса кайман, кӑшӑлланӑ пуҫ вӗсем хырӑмӗсене. „Канаш" хаҫатӑн 230-мӗш нумӗрӗнҫе: 1912 мӗш ҫулта пӗтӗм Рассейӗпе ӗҫнӗ путылккӑсене ретлесе хурса кайсан, пирӗн ҫӗр ҫӑмӑрне тӑвата хут ҫаврӑвса тухма пултараҫҫӗ, тенӗҫӗ. Кӑҫал та ҫав шута ҫитересшӗн пулмалла вӗсем. Тӑрӑшах, йалсовет. Шӑши шӑкӗ тинӗсе пулӑш, теҫҫӗ.

## Найана куллен праҫнӑк.

Ҫӗрпӳ уйесӗнҫе Мами йатлӑ паллӑ совхос пур. Совхосра лараҫҫӗ пит тӑнлӑ пуҫлӑ ҫынсем, ӗҫлеме йуратаканскерсем, пуринҫен ытла уй хир ӗҫӗсене пуҫтарса кӗртме йуратаҫҫӗ.

«Мами совхосӗн халӗ те виҫ теҫеттин йасмӑк ҫӗрсе выртаҫ. Ҫав йасмӑка ҫурмалла парса ҫултарсан та, совхосшӑн усӑллӑ пулмалла», тет корреспотент Хӑлха.

Совхос пуҫлӑхӗсене ытла та кахал пулнӑран, пӗтӗм тӗнҫери кахалсен ушкӑнне кӗртес, кахалсен конкурсӗсенҫе те вӗсем первай преми илме пултараҫҫӗ.

## «Ей, турӑ, пире пыҫҫӑкран хӑтарсам»!

Ҫейе ҫыннӑн куҫ саккӑр сӑваҫ, теҫҫӗ. Пупсен куҫӗсем саккӑр мар, вун саккӑр та сӑваҫҫӗ пулмалла.

Ҫӗрпӳ хулинҫи Касански ҫиркӳн пупӗсем йалти хресҫенсене пуҫтарса, малашне пыҫҫӑк ан пултӑр тесе, молепӗнсем туса ҫӳренӗ.

Ӑҫтан тупнӑ вӗсем пыҫҫӑк пуласран молепӗн тумалли сӑмахсене, трепнӗк (тӗрлӗрен молепӗнсем тумалли кӗнеке) ҫивҫе ун пек кӗлӗсем ҫукҫӗҫке. Ҫӗнӗрен шухӑшласа кӑларнӑ, анҫах турра йурӑхлӑ пулман пулмалла вӗсен ҫӗнӗ кӗллисем. Пыҫҫӑкран тасалаймарӑмӑр. Кӗлӗсем шухӑшласа кӑларма „Капкӑн ретаксине килмеллеҫӗ, унта «похослов-сем» пурҫӗ. Туса параҫҫӗҫ.

## Йӗпе пӑру.

Йапӑлти пӑру ик ама ӗмет, теҫҫӗ. Икӗмӗш-Ваҫкинри (Шурҫа вул.) потрепиттӗл копператтивӗҫе прикашҫӑк пулса тӑракан пӑру-Вӑрӑмтуна Микули пӗтӗм халӑха ӗмет.

«Вӑл копператтив укҫине 452 тенкӗ те 50 пус салатса йанӑ пулсан та, ҫапах та ӗҫе ҫӳреме пӑрахмасҫ», тет Хӗрлӗ коппературӑр».

Вӑл йӗпе пӑрува унтан пушӑпа хывса картана хупса лартас пулаҫ. Камӑн хывса кӗртмелле, хатӗрленӗр!

## «Ҫаплӑ ревисорсем».

«Капкӑнҫӑ» ҫыраҫ:

«Хурӑввар йалӗн (Ҫупай вул.) Иетех йатлӑ вӑрман пур. Пӗрре вал вӑрман хуралҫи хунав йумансене касгармасҫши тесе, 10 ҫынтан ревиҫи комиҫҫи суйласа ҫав вӑрмана

# „КАПКӐН“ МУҪЕЙӖ.



Кӳ мӗнле арђа? Шурђа вулӑсӗнђи Лепетер йалсоветђӗ ҫыруҫин шуҫ витнӗ арђи. Ей, калаймарӑм—йалсовет ҫыруҫин мар, унӑн йуратнӑ арӑмӗн. Ҫав арђара вӑл йалӗпе вархушши сутса илнӗ «Канашпа» „Капкӑна“ пытарса уерат. Ҫынсем вуласран пит хӑрат. Вӑл арӑм Фонвиҫин ҫырнӑ „Ҫитӗнеймен-скер“ йатлӑ пйесса вуласа ӑсланса кайнӑ пуђ Вӑл пйессӑра пӗр Скоттинин йатлӑ улпутӑн ашшӗ, хӑйӗн укҫине такам та пулин вӑрласа кайасран хӑраса, укҫа арђи ҫинђе ларсах ӗмӗрне иртернӗ, вилессине те ҫавӑнтах вилнӗ. Хӑрушӑ вилӗм.



Пӗђӗк хуравӑн пӑтти тутлӑ, ҫак хуравӑн шӗвви тутлӑ. Ун пек хурансене Вумпӑ-касси йеннелли хресђенсем Мӑн-Сӗнтӗрте пулакан кӗҫнерни пасарӗнђе милитсисем тытнӑ ерех тумалли хатӗрсен торкинђе туйаннӑ. Иӳн хакпах сутрӗҫ тесе, хресђенсем вырӑнти влаҫсене тав тӑваҫҫӗ. Ырӑлаҫҫӗ пулсан йурат, вара, ӳпкелесен лайӑх мар. Ҫапла мари, мӑн сухаллӑ ађамсем?



Ҫак кӗреҫе йур хырмалли кӗреҫе мар вӑл, ђӳређесем ҫӗмӗрмелли кӗреҫе. Вӑл кереҫепе Хыр-касси (Шемшер вул.) ҫынни Антун Микули, нумайрах ӗҫсен, йал тӑрӑх тӑлӑх арӑмсен ђӳређисене ҫӗмӗрсе ҫӳрет.



Каснӑ ҫӑкӑр татӑкне тепӗр хут ҫыпӑҫтарма ҫук, ҫак пӳрнене те ҫавах. Ӑҫтан ҫыпӑҫтаран ӑна? Аслӑ-Тайапари Лаптак Петӗр арӑмӗ ӑна хуђамӗш аллинђен ҫӗҫӗпе касса илнӗ те, халӗ вӑл ӗнтӗ самаскӑпа ҫыпӑҫтарсан та ҫыпӑҫас ҫук. Ак ӑна касакан ҫӗҫҫи те кунтах.





Ҫак ђулсем вӗсем метр виҫисем. Патӑрйел уйесӗнђе Ҫӗнӗ-Апхӳрт йалӗнђе 13 ҫул арман. Иалӗ „Ҫӗнӗ“ (Апхӳрт) йатлӑ пулсан та, армансеђи метр пуканӗсем авалхисемех. Корох патша ђухнехисем. Ђулсемпе виҫеҫҫӗ унта. Иапала тӑршшине виҫмелли виҫесем мӗнле-ши вӗсен? Ђавсасемпе виҫеҫҫӗ-ши? Ђулсемпе ђавсасемпе виҫнӗшӗн, ђавса ҫывӑх та, ҫыртма хӗн, темелле ан пулӑр.

пӑхма йарат. Лешсем, ревисорсем, 40 хуваз йуман 7 ђетвӗрт ҫуттилле сутса ӗҫсе йараҫҫӗ».

Майсӑр ҫынна кушак пӑхма та йураманни пулђӗ ӗнтӗ ку. Ӑҫтан кушак пӑхтаран вӗсене, хӑйсем те «Капкӑна» кӗрсе ларђӗҫ те. Кушак пӑхма хушнӑ пулсан, кушаккипех «Капкӑна» лекетђӗҫ.

# „Капкăн“ архивĕ.

## Вырăс ҫĕлхи.

Туркенĕв писсаттĕлĕн кĕнекинҫе пĕр ҫын хăйĕн йулташне калаҭ: савнă тусăм, есĕ нимĕн те пĕлместĕн пулсан, вырăс ҫĕлхине вĕрентекен уҫитлĕ пул, есĕ унта пултармалла, тет.

Ҫак хута ҫыракансене те вырăс ҫĕлхине вĕрентекен уҫитле кĕртмелле:

### В Правлению Чувашпроизводсоюза

Присем сообщает вам, что все отношение ваше получает Правлением лесопромышленной артели «Смола» при села Чувашския Тимяши Х.-Батыревской вол. не благовремени объздывая 4—5 дней назад при селе сообщает вам.

Пред. Правление П. КУЗЬМИН.

Член П. ЯКОВЛЕВ.

Ҫав, леш, вырăс ҫĕлхине пĕлменни пĕтеретҫке пире. Ҫăвашпроисвотсойус тенĕ сăмахра «ҫăваш» тенĕ сăмах пур, ҫавăнпа вăл ҫăвашла ҫырнă хутсене лайăхрах ăнланаҭ, тенине илтнĕҫĕ. Есĕр илтмени вара?

## Вăрланă хутсене йамалли йешҫĕк.

Патăрйел уйесĕнҫе ҫӳренĕ ҫухне ҫул май Турхан йалне кĕрсе тухрăм. Унта вулĕҫтăвком ҫурҫĕ ҫумĕнҫе пĕр йешҫĕк ҫакăнса тăраҭ. Иешҫĕкĕ ҫине „Тĕрлĕрен тупнă токкументсене йамалли“, тесе ҫырса хунă. Тупнă токкумĕнтсемне усă курас тесе мар, архив ваҫҫи кивĕ токкумĕнтсем пухма пулĕ и тесе, йешҫĕк патнерех пытăм Иешҫĕкĕ уҫах выртаҭ, ҫăри те ҫук. Тупнă токкумĕнтсем вырăнне, усал сăмахсем ҫырса пĕтернĕ ăшне.

Вăрасем, малалла йешҫĕк ăшне вăрланă лайăх токкумĕнтсене хурса хăварăр. Ман архив ваҫҫи лайăх токкумĕнтсем кирлĕ, усал сăмахсем ҫырса хăварнисем кирлĕ мар.

## Телефонокраммă.

Хăш ҫухне саветуйушҫи текеннисем пит ҫейе пулаҫҫĕ. Леш Огел Трута текеннине ҫавса тăршшех лартма тăрăшаҫҫĕ.

Сала вулăсĕнҫи уҫитлĕ Антонăв патне йанă телефонокрамă выртаҭ ман умра.

### Телефонограмма.

Учителю Аттиковской школы Антонову. Согласно Вашего заявления вы переводитесь в Бишевскую школу. Предлагается немедленно приступить к исполнению служебных обязанностей в Бишевской школе.

Зав. УОНО СОФРОНОВ.

Принял НЕКРАСОВ.

Пыр та калаҫ. Антонăв сайавлени паман пулин те, телефонокрамă ҫинҫе: «сана ху сайавлени папă тăрăх куҫаратпăр», тенĕ. Ма апла?—Ара, пĕлместĕри, вырăнтан вырăна куҫарнă ҫухне, уҫитлĕсене ĕҫлемесĕрех ҫур уйăхшăн шалу параҫҫĕ, телефонокрамă паракаинисем парасшăн мар пулнă, ҫавăнпа вĕсем „сайавлени пана тăрăххăн“ тесе суйнă телефонокрамă ҫинҫе. Маттур!

## Ҫаплă хăнасене кайран та йурĕ.

Хăш хутсем вырăна ҫас ҫитеймен пирки „Капкăн“ архивне пырса лекеҫҫĕ. Акă пĕр пек сотершанилĕ листăн 4-мĕш пайĕ ҫине ҫырнă 3 хут выртаҫҫĕ.

(Малта кама памалин хушаматне ҫырнă).

### Извещение.

Сегодня 6 го ноября в 7 часов вечера в помещени Чувашсоюза созывается собрание членов и кандидатов ВКП, членов ВЛКСМ и Профсоюзов, посвященное 9-ой годовщине Октябрьской революции.

После доклада «чай».

Секретарь ячейки (подпись)

Токлат хыҫҫăн ҫей пулнă пирки, тирсейлĕх решимне аса илсе, ҫĕнĕ хăнасем веҫĕра ан пыҫҫăр тесе ҫак хутсене кирлĕ ҫĕре нойапĕрĕн 8 мĕш кунĕнҫе тин леҫсе параҫҫĕ (12 сехет ҫурăра). Паҫҫă ҫинҫи тилĕпе тăрна пĕрпĕрне хăналанă пек пулĕ ку. Пит ăслă шухăшласа кăларнă, тилĕ йеврĕ ҫынсем.

# Косвĕнни налок.




— Валериан Феофанђ, мĕн вăл косвĕнни налок?

— Вăл ыйту финанс тĕлĕшпе. Астăватни Наркомфинра веђђĕр тунăђђĕ? Пушки йатлă пируса 12 пус вырăнне 17 пуса сутаççĕ. 5 пусĕ вĕсенђен—косвĕнни налок. Пĕлтĕн-е?

МИКИШ.

## Метр виçи.

— Уђун аки, ăçтан таврăнатăн?

— Копператтивран.

— Мĕн мурсем илтĕн?

— 5 метр саттин, тата 2 метр краççин илтĕм...

## Копператтăрсем.

— Кĕрзури, санăн укçа та пур, ма ара есĕ копператтив уçса хуçа пулмастăн?

— Уçасси уçас та, анђах пирĕн анне укçа шутне пĕлменни хуплаĭ.

ПОЛСУНККОВ.

# Минккин.

Кам вăл Минккин? Минккин вăл, тĕрĕссипе каласан, çамрăксене йертсе пыракан хастарлă аҫа, вошт майлăскер, ун çинҫен тепĕр майлă каласа пĕлтерес тесен, çакна калас пулат. Вăл Патăрйел уйесĕнҫи Курнавăш йатлă йалти вуламалли çуртăн саветуйушҫийĕ пулса пурăнат. Мăн карап ваҫҫи мăн шыв кирлĕ тевĕ ĕлĕк пĕр писсаттĕл майлă çын. Минккина та мăн шыв кирлĕ (ҫăн ҫăн шыв мар, ҫăн-ҫăн шыв çинҫе вăл антăхса кайма пултарат, мĕншĕн тесен унăн пуллăн пек ăша вĕрсе кайнă шыва кăлармалли çăварĕ çук), тепĕр майлă каласан, ăна волостной масштап сахал, вçесойуснăй масштап кирлĕ.

«Да здравствует три поколения основы строителей социализма—Пионер, Комсомол и партия большевиков».

Çак ăслă сăмаха Пуххарĕн, йе Ҫаплин калама пултарайман. Кăна Минккин калавă, мĕншĕн тесен лосăнк айне Минккин алă пуснă.

Çамрăксен кунне вăл çаван пек плаккатсем нумай çапса тултарнă. Пуривҫе те хăй пуçĕнҫен шухăшласа кăларнă ăслă сăмахсем:

„Да здравствует Ленинский комсомол и руководительница партия ВКП“!

МИНККИН.

«Комсомол, помогай партию в организации деревенской бедноты, еще не забывай и (о) пионере»!

МИНККИН.

«Кооперация—столбовой путь крестьянства к социализму. Молодежь, укрепляй кооперацию»!

МИНККИН.

«Привет комсомольцам всех нации»!

МИН ККИН.

Çапла пирĕн Минккин пек Минккин, Шурҫа вулăсĕнҫе, Йелҫĕк вулăсĕнҫе, тата ытти upăр тапăр вулăссенҫе пулас çук, вăл Курнавăшовçесойуснăй масштаплă йапала. Мавăн тата çьна çыраканнин çав лосăнксем çумне тепĕр лосăнк çырса çапас килет, авҫах вырăсла мар, ҫăвашла.

«Совет ăшманĕсем ҫĕтресе тăрăр, пирĕн Сойусра Минккин пур»!

Лосăнк айне хамăнах алă пусас:

АРСУПАИ.

# „Кулак“.

Ҫэрьў карти çумĕнҫе
Тăрат пĕр çын тайăнса,
Хăйĕн умне çĕр çине
Хунă тавар кăларса
Атти кувҫи пураклă
Йалтăртатат çутатса,
Йăрăм-йăрăм кăвавлă
Тăрат йĕмми карăлса.
Пиҫке пекех хырăмĕ
Пулса кайнă сарăлса,
Тепле унăн кĕрийĕ
Çурăлаймаст карăнса.
Пиҫĕ куçĕ хĕп хĕрлĕ,
Ҫышкă пекех сăмсийĕ,
Вăрăм, ҫике сухалĕ
Уй улми пек куçĕсем.
Çўçне касна кăмалла
Уçа йанă кайалла,
Тăханнă вăл каргуса
Хыçалалла каçăртса.
Ăна хирĕç пăхсасăн
Ҫăнах шухăшламалла
Кун пек çынна курсассăн
Айакранах тармалла
Утти тăррине пăхсан
Сысна кайат темелле,
Авҫах етемех пулсан
Кулак вăлă, пĕлмелле.

И. АРСКИ.

## Страхховккă.



— Мирун, мĕншĕн мунҫана вут тĕртсе çунтартăн?

— Сурхуривҫе ĕçмелле, кумасем килеççĕ. Укçа çук. Ку çуннăшăн страховккă парĕçи тетĕп те.




*Сывă, тăван ђăвашсем!*

Ман писменостсă Иехрем илсе килђĕ çырусем пĕр пысăк çĕклем. Вăл, йĕпе пăру, пин те пĕр çыру йăвăрĕшпе хашкакана йернĕ, кăвак пуçлă тăмана. Халĕ вăл çырусене парамха вуласа сире, ан ђар, ђур... Вулассине есĕр вулăр, куласссине ан манăр!

— «Пирĕн Ђупай вулăсĕнђе, ĕçлекенсемпе хресђенсен районĕнђе карт вăйи ашкăнаť, кăсйесене шăтараť. Кашни йалтах карт тусĕсен ушкăнĕ пурах. Ак, Иулашра, иртнĕ каçра йалсовет прегçетатлĕ Çтаппан Елексантрĕ Васли Микулине уринђи калушне выђаса йанă», тет Нăрă.

Çав ускăнђăвсем вулăсри милитсисем пырасран шикленмеççĕ-ха, хамăнах сăмсисенђен шаккаса пăхасха.

Ђастай кантонĕнђен Кутеме вулăсĕнђен çыраť хут йалкор „Каплут".

— Çуки санăн пăрăç; пирĕн йалта йумăç пролеттарисене улталаť. Ун килне кашни кун çын утаť, кашни кун вăл йумăç пăхаť. Çу, ђакăт, çамарта илсе пыраť ђухăн та, йумăç кутне лараçшăн. Халăха лартасшăн, суйа ђăпти çĕлетнĕ, пупсемпе пĕрлешнĕ. Пăрăç çитересђĕ, çывăрнă ђухне çав сĕрĕм хуçине".

Ах, ђурт!.. Вуламалли çурт тумалла пулаť, унтан çеç вăл ĕнтĕ хăраť.

Çыраť Мулкаđă йатлă кађă:

— Пирĕн йалта тăлăх матка çунма пуçларĕ. Муркар йал хапăхĕ çунма çакна памарĕ, сӳнтерсе пăрахрĕ. Муркар йалсовеđĕ хастарлă пулђĕ: çунакан ђĕртенех кăкшăмпа ерех çатлатса тухрĕ. Тытăнђĕç ĕçме. Унтан ђетвĕртне çаклатса тухрĕç... Ну, вара кӳпрĕç!.. Сӳнтерсе пĕтерсен, кăштах ĕшенсен, ђетвĕрт çăварĕнђенех ђăмпăлтатрĕç ерех хăмписемпе шамписем!.. Пиђкехырăм йалсовет, «Капкăн» сана хĕсет. «Капкăн» хĕснипе ђарăнмасан, Шупашкарти прокурортан саккун кĕнĕкисем туйăн!

Тепри „Кино" йатли çырса пĕлтерет:

— «Пирĕн Çĕнĕ-Мами йалсоветне курни есĕ, Капкăн тус? Çĕр çăташшĕ, пйус!.. Ара, вăтăр тенкĕлĕх вăкăрне, вăтăр тенке сутас вырăнне, 20 тенке сутса йаđĕ. Меçникĕ ерех ĕçтерђĕ вара ăна çавăншăн. Тупата турăшăн килне ђĕнсех ĕçтерђĕ, ĕçнине йал та курђĕ. Ревиçи комиççи те сыпса пăхрĕ. Халăха упытка турĕç, ђукăнсем кăмăлсăр пулђĕç».

Ах, мур, вăпăр! Ăçташи шăпăр?...

Иалкорсем, тата ытти хресђенсем, сыв пулăр, тутă пурăнăр! Çырусем йарăр, ват муђуна ан манăр!



ИАВАН МУЂИ.




## Ваттисене асӑнни.

Урам хушшинҫе икӗ маттур каҫҫӑ тӗл пулҫӗҫ.

Пӗрин пиҫӗ куҫӗ куранмасӑ, пӗтӗм пех шурӑ туттӑрпа ҫӑркаса лартнӑ.

— Кам сана кун пеккех ҫӗмӗрсе пӗтерчӗ? терӗ пӗри.

— Кӗҫнерни пасарне кайсан, леш ваттисене асӑннӑ кун пектерсе йаҫӗҫ.

— Ай! ай! Сана ваттисене асӑннӑ кунах ун пек лектерчӗ пулсан, ҫӑварни ҫухне мӗнле лектерсе йарӗҫ?

ШАШИ.

## Шалу.



— Иӑван, сан пата ма пит хут нумай килет?

— Иетӗрнене ҫӗнеҫҫӗ.

— Мӗн пӗн?

— Проккуратгурӑ ҫӗнет.

— Унта шалу мӗн ҫул пулаӗ?

Каквой шалу, вӑрҫнашӑн тоироса ҫӗнеҫҫӗ, тӗрмене хупасшӑн.

ҪУЛКӐ.

## Тем тӑвас?

Епӗ тӑхӑр ҫултах шкула ҫырӑва вӗренме кайрӑм. Иалан тӑрӑшса вӗренеттӗм. Вуласса та шыв пек вулаттӑм. Ҫапла епӗ пӗрре ҫӑвашла пуквар ҫинҫен вуланӑ ҫух: ватӑ ҫынна туйа кирлӗ, пӗҫӗк аҫана сӑпка кирлӗ, тенине тӗл пултӑм. Ҫӑнах та ҫапла ҫав. Кӑна епӗ ӳссен те асрах тытас-ха тесе пурӑнтӑм. Ӳсрӗм. Авлантӑм. Аҫа ашшӗ те пултӑм. Пӗрреҫен епӗр атте, хам, тата хам матка кукӑҫ ҫисе ларатпӑр. Сӑпкари аҫа хӑй тапӑлтатнипех ҫӗре лапӑшт тухса ӳкрӗ те, ҫухӑрса йаҫӗ. Матка аҫана каллех сӑпкана ҫӗклесе выртарҫӗ. Хайхискер епӗ те, пукварта ватӑ ҫынна туйа кирлӗ, пӗҫӗк аҫана сӑпка кирлӗ, тенине аса илтӗм те, тултан ал туйи илсе кӗрсе кукӑҫ ҫисе ларакан аттене патӑм пӗрре ҫамкинҫен. Атте ҫӗре леп кайса ӳкрӗ. Урайенҫе выртакансkерне патӑм тепӗр хут. Атте аран кӳрӗше тухса тарҫӗ. Унтан вулӑсри милитси патне кайнӑ та сута панӑ. Сугра ӗҫӗ мӗлле пулнине каласа парсан, мана атте килӗнҫен уйӑрса йамалла, тата ҫур ҫуллӑх тӗрмене илсе каймалла турӗҫ Сутйесене епӗ пуквар ҫинҫе каланӑ пек пурӑнни килӗшмерӗ.

ҪАШЛАМАХ.

## Тирпейлӗ ҫын.

Хресҫен. Уртеми Иӑванҫӑ, ӑҫталла ҫуптаратӑн?

Уҫитлӗ. Шкултан таврӑнатӑп. Пӳртсурт пиҫӗ сивӗне пуҫларӗ. Тимӗр кӑмака трупи ҫукҫӗ те, ӑна илсе таврӑнатӑп.

Хресҫен. Хаклӑ патӑниха ӑна?

Уҫитлӗ. Мӗн хакли? Каҫоннай. Леш, шкул кӗтессинҫи шыв йухмалли трупа.

СИЛЕР.

## Пĕртен пĕр ывăл пĕтрĕ.

Уҫитлĕсем аҫасене вĕрентнĕ ҫух йалан тăрăшса пуҫа ватса вĕренме хушаҫҫĕ. Ҫапла манăн аҫа шкултан таврăнсан, кĕнеке вуласа ларатҫĕ. Епĕ ăна питĕ тăрăшса вĕренме хушаттăм. Пĕррехҫен вăл пӳртре пуквар кĕнеки тытнă та вуласа ларат. Вуланине итлерĕм те савăнса пуҫне ватарах вĕрентĕрҫҫĕ ха тесе, кăмака умĕнҫе выртакан вут пуленккине илсе пуҫĕнҫен йара патăм...

Аҫа ҫĕре йăванса кайса ӳкрĕ те, выртат ним шавламасăр. Пуҫĕ татах лайăхрах вантăр тесе, епĕ ăна тепĕр пĕрик хут йанлаттартăм. Матка шыв сӳрсе таврăнҫĕ те, аҫа пӳртре ăнсăр вытрнине кура тӳррех мана йатлаҫма тытăнҫĕ.

Аҫана пуҫне ватса вĕрентесрен арăм хăранăран тарăхрăм та, хайне тăхăнтартса илтĕм. Матка макăра макăра тулалла тухса кайрĕ. Аҫа урайĕнҫе ним шавламасăр выртат. Лайăхрах пăхрăм та вăл вилсех кайнă мĕн. Аппай! Турҫырлах, пуҫа ватса вĕрентесси ҫăмăл ĕҫ мар иккен. Тепĕр куние аҫана пытартăмăр. Латнă, йалти прегҫетаттĕл аван ҫын тĕлне пулҫĕ, милитсийе ан систер тесе, пĕр пулăштух ҫеҫ ĕҫтертĕм. Ахалĕн хама шур ҫурта илсе кайасси те инҫе марҫĕ.

ҪАШЛАМА.

### Тирпейлĕх решимĕшĕн.

— Йăван, сана комсомолтан ма кăларса пăрахрĕҫ тетĕн-ха?

— Тирпейлĕх решимĕшĕн.

— Мĕнле апла?

— Ҫаплах! Епĕ тирпейлĕх решимне астуса 5 уйăх ҫлен укҫи тӳлеменҫĕ те, хам та сисмен, кăларнă пăрахнă.

Сантăркка.

### Йумăҫпа ватă.

— Крахвине йумăҫ, сана питĕ пĕлет теҫҫĕ. Пĕлмĕни манăн арăм Кĕтерин мĕн йатлă?

— Кĕтерин.

— Ман аҫа Ваҫккă мĕн йатлă тата?

— Ваҫккă.

— Ах, ăҫтан пĕлетĕн есĕ.

ҪУЛКĂ.

## „Капкăнран" хăраҫҫĕ.



Пĕрремĕш куйанĕ: Хĕл те ҫитет. Пире етемсем капкăнпа тытма пуҫлĕҫ.

Пурăнăҫи ку?

Иккĕмĕш куйан: Ҫитменнине тата Шупашкарта пĕр ҫын икĕ «Капкăна» 10 пуса сутса пурăнат, тет. Кам илес текенне пурне те парат, тет. Вара пире ҫăҫĕ аҫисем те тытма пуҫлĕҫ. Кăҫал епĕ шăтăкрах выҫаса ларас, тетĕпха.

---

## ҪИЙЕ.

— Ма-ха есĕ, Иемелек,
Анана ҫурса илен?
— Мĕн каласан, Миккитта,
Еп ҫурса илмен нихҫан та.
— А... тата мĕн-ха вăл?
Илем еп хам ананах:
Ултă ҫалăшҫĕ ман вăл,
Халĕ пиллĕк ҫурă анҫах.
— Айăплă уншăн епĕ мар;
Ман сука пуҫ пит кăпмар:
Суха тимĕр сарлака
Ҫампа пулат вăл апла.
— Кама суйан, Иемелен!
Капла калаҫкаласан,
Кун пек ĕҫ тата тусан
«Капкăна» та ес ленкĕн.
— Ах! Миккитта ан шарлах,
Кун пек урăх тумаспах.
Ак ку ҫур ҫалăш ҫурнишĕн
Ĕҫтерĕп сана лайăххăн.
— Ну, Иемелек, прелĕхе
Каҫаратăп еп сана,
Тата тусан ку ĕҫе
Пĕҫертетĕп пушăпа.

АКИН.

# ПРАÇНĂК ИЛЕМ-ĔСЕМ.

1) Сĕрĕм çăтаççĕ.



2) Кайран хăсаççĕ.




3) Тасатаççĕ.



4) Ăсатаççĕ.



Отв. Редактор А. ЗОЛОТОВ.

КАМ ХАЛИЂЕН „КАПКĂН“ ШУРНАЛ

ÇЫРĂНСА ИЛМЕН.

ХАКĔ ÇАПЛА:

1 уйăха . . . . . — 10 пус. | 6 уйăха . . . . . — 60 пус.
3 „ . . . . . . — 30 „ | 1 çула . . . . . 1 тенкĕ.

Укçа вырăнне маркkăсем йарсан та йураť. Атрĕсĕ çапла: Чебоксары. Контора газеты „Канаш“.

Хуђĕ çине „Капкăн“ илме тесе çырма ан манăр.

Чувашлит № 1037. Чебоксары, тип. „Чувашская Книга“.